Патша самани чухăн çын ачисене вĕрентессишĕн тăрăшман, пуйан таврашĕсене çеç вĕрентнĕ. Çавăнпа та пирĕн йалта, штат йăлисенчи пекех, вĕренне çынсем сахал пулнă. 20 çул кайăла, йалти шкулсенче вĕренекенсен хисепĕ 7—8 ачаран ытла пулман. Учитель пĕрре çеç пулнă. Агрономсем, зоотехниксем çинчен йăтмен те.

Тăмăл çĕр çинче тырă питĕ начар пулнă. Çавăнпа та çиме тырă çитмен. Нумайĕшĕн кулаксем патĕнче ĕçлемелле пулнă. Кулакĕсем питĕ чеĕе пулнă, пĕр пат кивçен тырă парсан тепĕр çулне икĕ пат илнĕ. Хресченсен- савăнăçлă вăхăтсем пачах та пулман. Çавăнпа вара хурлăхлă йурăсем кăна илтĕнĕ йалта.

„Чупрăм антăм çырмана
Тăрă шывпа пит çума.
Анне мана çуратрĕ
Куççулĕпе пит çума.

Ӳсрĕ пĕччен тăлăххăн
Уйăри вăтă хурама.
Ӳсрĕм еп те çавнашкал
Пурнăçра çăпăн курма.

Сат варринчи улмине
Тăтса çиме пулмарĕ.
Çакă хĕнлĕ пурнăçна
Ырлăх курса пулмарĕ...

Çапла пулна ĕлĕкхи вăхăтра Кораккасси йалĕн сăн-сăпаче.

1928 çулта пирĕн йалта колхоз организацленчĕ. Колхоза малтан 7 хуçалăк кĕне. Кайăрахпа йалти ытти хресченсем те кĕчĕç.

Колхоз организацленни 9 çул тултарса 10-мĕш çул çине кайна çĕре пирĕн йал палламалла мар улшăнчĕ.

Колхозăн халĕ пысăк клуб, машин сарайĕ, лаша вити, сысна вити, урапа сарайĕсемпе тырă кĕлечĕсем катраннăх курăнса лараççĕ. Пирĕн тата çăм тапмали, тăла пусмали - машинăсем те пур. Йăлăхуçалăх машинĕсĕм те çителĕклĕ. Пурнăç лайăхланнă май колхозниксен культури те ӳссех пырать.

Кашни колхозникех хăçатсемпе журналсем илсе тăрать. Вĕренекен семпе вĕреннĕ çынсен шучĕ нумай ӳснĕ. Халĕ пирĕн 57 киле йалти пусламĕш шкулсемпе тулли мар вăтам. шкулсенче—36 ача, техникумсемпе вăтам шкулсенче 6 ача вĕренеççĕ. Учительсем 4 çын, зоотехник—1, трактористсем, машинистсем пур.

Йалта ĕлĕкхи хура пӳртсем вырăнне 4—5 чӳречелĕ пысăк пӳртсем çутăлса ларăççĕ.

Акă тĕслĕхшĕн, Макар Филимонов колхозникех илер. Унăн семьи кăçал 800 ĕçкунĕ тунă, вăл 400 пăт тырă илет.

Филимонов колхозра ĕçленипех çĕнĕ пысăк пӳрт лартрĕ, вырăсла хапха, ăшă виге, лаç турĕ. Ĕлĕк вĕсем хура пӳртре пурăнса. Халĕ вăл выльăх-чĕрлĕх тӳнумай усрать.

— Пурнăç хаваслăран та хаваслă пулса тăчĕ. Кунашкал ырă пурнăçа епĕ ĕлĕк, тискер патша самани вăхăтĕнче, тĕлĕкре те курма пултарайман,—тет Филимонов йалтан.

Ĕлĕк вĕсен семйинче çичĕ çын пулнă. Патшан киревсĕр саккунĕ тăрăх, çĕр пĕр йат тӳни кăна панă. Вăл та пулин лайăх çĕр пулман, йăпăх çĕр пулнă. Çавăнпа тырă çиме çитмен. Çиме тырă ситменнине Федоров кулак патĕнче чылай тар йухтарса ĕçленĕ.

Пӳрт пĕчĕкĕ, мунча пек кăна пулнă. Пирĕн çумĕнче вĕрлĕк алăк хăлтăр-хăлтăр туса ларнă. Сарай йăтăнса анма пуçланăшкер çеç пулнă. Выльăх чĕрлĕксенчен 2—3 сурăх çеç усранă. Иĕркелĕн тумланса çӳреме тумтир пулман.

Акă тата Константин Абрамов колхозник ине илер.

Вăл та ĕлĕк çитмен пурнăçпа хуçа пӳртри кăвак тĕтĕм ăшĕнче пăчăхса ӳснĕ. Çиме тырă çитмен. Çавăн пиркийех вăл Атăл çинче ĕçлесе пурăннă. Унăн ун чухне хăйĕн выльăх-чĕрлĕх пулман.

Йалта колхоз организацилесенех, Абрамов колхоза кĕчĕ. Тăçантапа кĕтнĕ пурнăç тинех вара çитнĕ. Куççулсĕр, тарăхусăр, ырă пурнăç пуçланнă унăн.

Халĕ Абрамов хăй те, унăн çемйи те çителĕклĕ пурнăçпа савăнса пурăнать.

Колхоза кĕрсен тăрăшса ĕçленипе пӳрт лартрĕ. Пӳрчĕ пысăк та илемлĕ. Пĕтĕмпе 4 чӳречеле, вĕсем хĕвеллĕ кун тĕкĕр пек çутăлса йал илемне кӳреççĕ. Тырпул çителĕклĕ. Выльăх-чĕрлĕх те çителĕклĕ усрать. Ĕне—1, сурăхсем—6 пуç, сыснасем тата чăх-чĕпсем чылай.

Ӳсет колхоз, пуйанланат колхозниксен пурнăçĕ. Савна кура колхозниксен ĕçлес хастарлăкĕ кунран кун хăпарса пырать. Унăн епĕр Сталин йулташа тав тăватпăр.

Халĕ епĕр ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленетпĕр. Суйлав саккунне тĕплĕн вĕренетпĕр. Епĕр Ленин—Сталин партийĕн ĕçĕмĕн, Тăван çĕршывăн тăрăшса, пĕтĕм вăйа хурса кĕрешекен çынсене çеç Аслă Совета суйлатпăр. Пирĕн Аслă Совета суйламали ун малтанхи депутат—Сталин йулташ пулать, тесçĕ Кораккасси колхозникĕсем.

Колхозăлă йалта халь савăнăçлă йурăсем шăранаççĕ.

Ирĕк пурнăç тейĕтпĕр,
Культурлăх ӳс тейĕтпĕр,
Çĕнĕ Конституцине
Телейлĕхсем илетпĕр...

Аслă Советшăмăллă революцин Совет Сойузĕнчи пĕтĕм ĕçхăлăхĕ вальӳн телейлĕ пурнăç çулне уçса пачĕ. Ленин—Сталин партийĕ иĕртсе пынипе ĕçхăлăхĕ чăн-чăнах телейлĕ пурнăç çулĕ çине тăчĕ.

Ф. Филиппов.

Канашри вăтам шкулăн V-мĕш классĕнче вĕренекенсем физкультурă урокĕнче.

Цыганов фото-ӳкерчĕк.

Макаров колхозникăн асаилĕвĕсем

Макаров Иван йулташ 60 çулта. Вăл халĕ районри культурă сурчĕнче хуралçăра ĕçлет. Макаров йулташ ватă пулсан та çамрăкксемпе пĕрлех „СССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренмĕ хавасланса заньатисене сиктермесĕр çӳрет.

Вăл хĕрех çӳрет хушши патша саманинче пурăннă, асаплă, йăвăр, нушалă пурнăçа нумай курнă. Çамрăклах тăлăха йулнă. 24 çул хушши кĕçĕ кĕтнĕ, кулаксен тарçи пулса çамала йухтарнă çĕрте ĕçленĕ. Хытă, тара йухтарсах ĕçленĕ, çапах тăвариччен çăкăр çиймĕн. Выльăх-чĕрлĕх тавраш ӳсраса курман.

7 çул хушши патша çар службинче пурăннă. Салтака кайсан ун кил вырăнне йалти кулаксем ерехле сутса янă. Салтакран тавранĕ, пурăнма çурт, тăхăнма çи-пуç пулманни. Каллех вăл кĕтӳ кĕтме кайнă. Пĕччен ĕçленипе пӳрт лартма вăй çитеркĕмен. Авланнă, аранмăн, çемйе те кĕтӳ кĕтме илсе кайнă. Арăмĕпе икĕшĕ ĕçлесе мунчаран пĕр пĕчĕк пӳрт лартнă.

Акă мĕн калаç Макаров йулташ ĕлĕкхи суйлавсем çинчен:

„Епĕ ĕлĕк суйлава хутшăнман. Çапах, мĕнле суйлавине лайăх асăтăватăп. Йал старăстине кулаксене, шаллăрах мул хуçисене старшина кăтартса панă тăрăх суйлаччĕç. Вулăсри старшинана 3 çулта пĕрре «суйлаччĕç». Пирĕн вулăс центрĕ Шуркассинче пулнă. Старшинана суйлама кашни йалтанах полномочисем суйлăса вăрахăçлĕç. Пирĕн йалтан та 2 çын кайаччĕç. Кашни кулак, мул хуçи—старшинана кĕме тапаланат. Çавăнпа вĕсем суйлав кунĕнче ĕç суйлав умĕн, ĕçкĕ тунă. Кам ытларах ĕçтерсе хăйсене майлă мумайрах полномочисене çавăрма пултарнă—çав старшинана суйланнă. Тоссинккисĕн Петров Ананий, виçĕ шыв арманĕ, çăм тапакан тата кĕрпе çурăкан армăсен тытаканскер, татти-сыпписĕр 12 çул хушши старшинара çӳрерĕ.

Çар службинче чухне те: «салтаксен политикă» ĕçне хутшăнма ла мар. Турă йăвĕпе, патша хушнипе тăшмана хирĕç кĕрешмелĕ", тесе суйлава хутшăтăрнă. Çапла, епĕр, чухансем, суйлав йĕркинче те пĕлеймен.

20 çул ĕнтĕ епĕ иртĕлĕ совет гражданинĕ. Суйлава пурте пĕртан правалла хутшăнатпăр. Пирĕн пурнăç куньпекех, культурланса пырать. Ĕлĕк тырпула вăрлăхлăх анчах туса илнĕ пулсан, кăçал пĕчĕк семйенех 200 пăта йăхăн тĕштыра илетпĕр. Ачасем вĕренеççĕ. Тулли, савăнăçлă пурнăçпа пурăнаççĕ.

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче, епĕр, пирĕн пурнăçа лайăхрах тума тăрăшакансемшĕн, ĕçхăлăх тăшманĕсемпе хăйаррăн кĕрешме пултаракансемшĕн, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн чĕререн тăрăхан çынсемшĕн сасăлатпăр", —тет Макаров йулташ.

Т. Логинов.

Октябĕрти Социалисăмла Аслă революцин пулнăранна 20 çул тултарнă тĕле. **Ӳкерчĕн çинчи:** В. И. Ленин, И. В. Сталин тата В. М. Молотов „Правда" хаçат редакцинче. 1917 çул. П. Васильев художник ӳкерчĕкĕ. (Центрти В. И. Ленин музейĕ).

(Сойузфото).

Парторганизацин районри пухăвĕ

ВĂРНАР (хамăр корр.). Октябĕрĕн 26-мĕшĕнче районри парторганизацин пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн йулташки Пленумĕ тата ПСК(б)П Чăваш Обком Пленумĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне суйласи çинчен йышăннă решенисем пирки доклад пулчĕ.

Доклад хыççăн пренире тухса калаçăнсем, районри колхозсенче тата район центрĕнче Сталинла Конституцине „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренесси çителĕксĕр пынине палăртрĕç. Вăрнар поçолкă çовечĕ пайăнки куна çитсе те поçолкăри граждансем хушшинче суйлав саккунне вĕрентме кружоксем организацилемен. Çавăн пекех Çарăклă, Пенер поçолкисенче килхуçи арăмĕсене вĕрентес ĕçе организацилемен.

Колцовкăри Сталин колхозра колхозниксене суйлав саккуне вĕренес ĕçе çĕр процентĕнпех йăвăçтарнă. Кружоксене ватă старикисемпе карчăксем те вĕрениме çӳреççĕ.

Йалсовет çекцийĕсем

Мăн Турхан йалсоветçĕн 7 çекци. Вĕсенче 42 çын. Хăшпĕр çекцисем Октябĕр уйăвĕ умĕнхи социалисăмла ăмăртăва хутшăннă. Л. Семенов йулташ ĕçертсе пыракан выльăхчĕрлĕх çекцине илсе пăхать. Вăл выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе туйă государства планне тултарасси çинчен çекци членĕсемпе 4 хут пухăнса канашлу туса иртернĕ. Çекци членĕсене ферма тата лаша вити сумне уйăрса çирĕплетнĕ. Çекци членĕсем тăрăшса ĕçленине йалсоветне кĕрекен „Шурăмпус" тата Ленин йăчĕпе тăракан колхозсем 1937 çулхи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана тултарнă. „Шурăмпус" колхоз халĕ сысна вити туса пĕтернĕ. Фермăра сыснасен йышĕ çултан çул хутшăнса пырать. Ситес çулта пĕтĕмпех ĕратлă сыснасем пулаççĕ. Лашасене хĕллехи вăхăтра çитерме апат çителĕклĕ уйăрса хунă.

Хатĕрлев çекци ытти çекцисене пример кăтартать. Çекцин кашни членнех уйăрăм участкăсем тăрах уйăрнă. Кашнинех уйăрăм ĕçсем панă. Вăрман хатĕрлевĕнче 2 çын, сĕт-çу, аш-какай ĕçĕсемне 4 çын ĕлеççĕ. Çавăн пекех ытти хатĕрлевсем тăрах та ĕçлеме сăмах уйăрнă. Пайăнки куна йалсоветне кĕрекен икĕ колхозăн те государственăвă умĕнчи обязательствăсене пурнăçланă.

Йалсовет президиумĕ çекцисен ĕçĕсене çителĕклĕ иертсе пымасть. Вĕсенчен вăхăтра отчетсем ирттемĕст, кавалпу туса çекцисене ĕçлеме вĕрентмест. Çавăнпа та финанс, культурă, оборона, çулйĕр çекцисем хăйсен ĕçне тивĕçлине туса пымаççĕ.

Йалсовечĕн çекцисене лайăх иертсе пымала, малта пыракан çекцисен паха опычĕсене кайра пыракан çекцисем хушшинче анлăн сарса йăмала.

Ник. Козлов.

Тупăшлă сад

СĔНТĔРВĂРРИ Чĕнерти „Стрела" колхоз 1932 çулта 20 гектар çине тĕрлĕрен йăвăçсем лартса сад пахчи турĕ. Вăл шутран улмуççисенне виктори сырли куракесем 14 гектар, чĕй çырлисемне чернослив йăвăçсисем 2 гектар, хурлахансемне хăмла сырли йăвăçсисем— 4 гектар.

Тĕрес пăхма пĕлмен пирки, колхоз 1935 çуллăн çав сад пахчине кирлĕ пек çумăр çухраймарĕ. 1935 çулта колхоз правленийĕ А. Авдеев колхозник сад пахчи пуçлăхĕ туса çирĕплетес хăварчĕ. Авдеев йулташ агроном асăлăхĕ катартăнăй пек тĕрĕс ĕçлесе, сад пахчине пысăк тупăшлă турĕ. 19 ĕçулта 688 килограмм хăмла сырли пуçтарса илчĕ. Кăçалхи çул колхоз сад пахчинчен 1.000 тенкĕ таса тупăш курĕç.

П. Васильев.

эксплоатацилессине пуçăрлас ерă **иртсе кайрĕ.**

Колонисенчи тата пăхăнса тăракан çĕршывсенчи ирĕке кăларакан революцисен ери, çав çĕршывсенчи **пролетариат** вăрăннă ерă, революцине вăл **гегемон** пулас енă **килсе çитрĕ.**

3. Революци вăрлăхĕсене империализăм центрĕсене те, унăн тылĕсене те сапса, империализăм вăйăхăвне „метрополисенче" вăйсăрлатса тата вăл колонисенче пуçлуса тăнине тĕпрен сиплентерсе тĕрекĕрлетесе,—Октябĕр революцийĕ çала тунине тĕнчери капиталисăмăн **пĕтĕмĕшле** пурăнăсĕнне хăйне ыйту туса хучĕ.

Капиталисăмăн стихийлă аталанăвĕ империализăм условийĕсенче,—унăн аталанăвĕ пĕр тан та пĕр тикĕс мар пулса пынă пирки, конфликтсемпе вăрçăлă çапăнусем хăтăлма çукаш пулмала пирки, йулташинчен, халиччен пулса кунман империализăмла вăрçă пулнă, пирки, — «çĕрле пырас» та «вилес пырас» процесса ӳсе иртнĕ пулсан, Октябĕр революцийĕ тата ăна пула пит те пысăк çĕршыв капиталисăмăн тĕнчери системăнчен хăйăлса тухни, тĕнчери империализăмăн чи тĕп никĕсĕсене утăм хыçăн утăм сисе тĕрекĕрлетесе пырса, çав процесса хăвăртлатмасăр тăма пултарайман.

Унтан «та ытларах. Империализăма тĕпрен сиплентерсе тĕрекĕрлетесе, Октябĕр революцийĕ, çавăнпа пĕрлех, пĕрремĕш пролетарлă диктатурăна пĕтĕм тĕнчери революцилă йухăмăн хăватлă та уçă никĕсĕне туса хучĕ, кун пек никĕс тĕнчери революцилă йухăмăн ĕлĕк **никăçан та пулман,** халĕ ĕнтĕ вăл ун çине тăйăнма пултарать. Октябĕр »революцийĕ тĕнчери революцилă йухăмăн хăватлă та уçă **центрне** туса хучĕ, кун пек никĕс унăн ĕлĕк **никăçан та пулман,** халĕ ĕнтĕ вăл империализăма хирĕç **мĕн пур çĕршывсенчи пролетарисен тата пусмăрта пурăнакан халăхсен революцилĕ пĕрлĕхĕ фронтне организацилесе,** ун тавра кĕтĕç-ме пултарать.

Ку, чи малтан, Октябĕр революцийĕ пыракан çĕршывсен" общественăлла-политикăлă пурнăçне тытса чарайми ырă реакци тĕттĕмĕне вăрăм вăхăтра хупăрласа хунă пулĕччĕ. „Большевикла государствăн пур ахаль фактăн та реакцийĕн хура вăйĕсене йĕвĕнтенине, вăл пусмăрта пурăнакан классене хăйсене ирĕке кăларассишĕн кĕрешме çăмăллатнине туса çук. Çавăнтан, тĕрĕссине, килет те ĕнтĕ мĕн пур çĕршывсенчи експлоататăрсен большевиксене тискеррĕн кулăймалли. Истори, çĕнĕ никĕс çинче пуçлăнсе, тепĕр хут пулса пырать. Ĕлĕк, **феодализăм** ишĕлсе пынă тапхăрта, «якобинец" тенĕ сăмах мĕн пур çĕршывсенчи аристократсен сехрине хăпăтнă тата вĕсене «йĕрĕтерĕр» пекех, халĕ ĕнтĕ, **капитализăм** ишĕлсе пынă тапхăрта, «большевик" тенĕ сăмах буржуала çĕршывсен сехрине хăптаттăр та йĕрĕтерет. Тата, йăлтах урăхла, çĕкленекен **буржуазин** революцилĕ представительĕсемпĕн Парижĕнче хăтлăх тата шкул пулнă пекех, халĕ ĕнтĕ Мускав çĕкленекен **пролетариатăн** революцилĕ представительĕсемпĕн хăтлăх тата шкул пулса тăрать. Иакобинăсене кураймасăр феодализăма ишĕлсе арканасран çалаймăн. Икколлеме пулаймăн ĕнтĕ, большевиксене кураймасăр капитализăма, ăна пур-пĕр çĕмĕрсе тустарасран çăлма пултарас çук пирки?

Капитализăм „тĕрекăх" ери **иртсе кайрĕ,** буржуала йĕркесен çирĕплĕх çинчен калакан легендăна хăйне пĕрле илсе кайрĕ.

Капитализăм ишĕлсе арканас ерă **килсе çитрĕ.**

4. Октябĕр революцийĕ экономикăлă тата общественăлла-политикăлă çыхăнусен обăзĕнчи революци кăна мар. Çавăнпа пĕрлех вăл ăссенче пулнă революци, вăсен классăн идеологийĕнче пулнă революци. Октябĕр революцийĕ марксизăм флагĕне, пролетарлĕ диктатурă идейин флагĕне, империализăм тата пролетарлĕ революцисен саманинчи марксизăм пулса **тăракан ленинизăм флагĕне çуралса çи-нелленĕ.** Çавăнпа та вăл марксизăм реформисĕма çĕнтерине, ленинизăм социал-демократисĕма çĕнтерине, III Интернационал II Интернационала çĕнтерине пĕлтерет.

Октябĕр революцийĕ марксизăмпа социал-демократисĕм хушшинче, ленинизăм политикине социал-демократисĕм политики хушшинче каçма çук канав туса тухрĕ. Ĕлĕк, **пролетарлăт диктатурăн çĕнтеричен,** социал-демократи пролетариат диктатурин идейне усçăнах тухнăçăн, анчах та çав идейăна пурăçлассине сывхартасшăн нимĕн те, пачах нимĕн те тумасăр, марксизăм флагĕне капăрланса вĕçкĕленеме пултарнă, мĕншĕн тесеп социал-демократи хăйне хăй «çавăн пек тытаканă капиталисăмшăн. нимĕне хăрушлăх та хăларас тăратман. Ун чухне, çав тапхăрта, социал-демократи марксизăма формаçăна пĕр тĕслене, йĕн-пĕр тĕслене тăнăпа пĕрех пуçнă. Халĕ, **пролетариат диктатурин çĕнтернĕ хыççăн,** марксизăм **мĕне** илсе пынине, тата вăл çĕнтерни **мĕне** пĕлтерне пултарнине пурте кукĕçĕртеç курсан, социал-демократи, капитализăмшăн пĕр-пĕр хăрушлăх тумасăр. марксизăм флагĕне капăрланса вĕçкĕленеме пултарайманăр ĕнтĕ, пролетариат диктатури идейне хуçаланса курнăçлăма пултарайманăр. Унăн марксизăмран таçăнах уйăрăлса кайса, марксизăм флагĕнчен те ирĕкĕсĕрех уйăрăлса каймала пуçлăр, вăл марксизăм ачине хирĕç, Октябĕр революцине хирĕç, тĕнчери пĕрремĕш пролетариат диктатурине хирĕç уçăн та икĕлеме шухăшламасăр-хирĕç революцилĕ капиталистсемпе мар хирĕç тăнăç. Халĕ унăн марксизăмран уçăн уйăрăлса каймала пуçлăç, чăн-чăнах уйăрăлса кайрĕ те, мĕншĕн тесен халăхи условиесене тĕнчери пĕрремĕш пролетариат диктатурин çĕнтерĕвĕшĕн условиесем туса пынăçăн та пурнăçа шеллемесĕр пулăшса пымасăр, харшăхăй çĕршыври буржуазине-хирĕç революцилĕ кĕрешесе пымасăр, харшăхăй çĕршывĕнче пролетариат диктатурин çĕнтерĕвĕшĕн условиесем туса пымасăр хăна-ху марксизăм тĕне çук. Социал-демократизăм / марксизăмăн хушшинче

тата Ленин йăчĕпе тăракан колхозсем 1937 çулхи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана тултарнă. „Шурăмпус" колхоз халĕ сысна вити туса пĕтернĕ. Фермăра сыснасен йышĕ çултан çул хутшăнса пырать. Ситес çулта пĕтĕмпех ĕратлă сыснасем пулаççĕ. Лашасене хĕллехи вăхăтра çитерме апат çителĕклĕ уйăрса хунă.

Хатĕрлев çекци ытти çекцисене пример кăтартать. Çекцин кашни членнех уйăрăм участкăсем тăрах уйăрнă. Кашнинех уйăрăм ĕçсем панă. Вăрман хатĕрлевĕнче 2 çын, сĕт-çу, аш-какай ĕçĕсемне 4 çын ĕлеççĕ. Çавăн пекех ытти хатĕрлевсем тăрах та ĕçлеме сăмах уйăрнă. Пайăнки куна йалсоветне кĕрекен икĕ колхозăн те государственăвă умĕнчи обязательствăсене пурнăçланă.

Йалсовет президиумĕ çекцисен ĕçĕсене çителĕклĕ иертсе пымасть. Вĕсенчен вăхăтра отчетсем ирттемĕст, кавалпу туса çекцисене ĕçлеме вĕрентмест. Çавăнпа та финанс, культурă, оборона, çулйĕр çекцисем хăйсен ĕçне тивĕçлине туса пымаççĕ.

Йалсовечĕн çекцисене лайăх иертсе пымала, малта пыракан çекцисен паха опычĕсене кайра пыракан çекцисем хушшинче анлăн сарса йăмала.

Ник. Козлов.

Обязательнăй йĕркепе государствăна сĕт тăратас тĕлĕшпе ĵеготăсем çинчен

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

1. Колхозниксен килĕсен, сăвăн пекех йединоличниксен хуçалăхĕсене те иртнĕ çулсемшĕн — 1936 çула та кĕртсе — обязательнăй йĕркепе государствăна сĕт парса тăтманни йăлăна недоимкăсене шыраса илмелле мар тăвас.

2. Колхозниксен килĕсене тата йединоличниксен хуçалăхĕсене пурне те хĕсĕр ĕнесемпĕн обязательнăй йĕркепе государствăна сĕт тăратассинчен хăтарас.

3. Унăн пуçне, 1938 çулхи йăнварĕн 1-мĕшĕнчен, тавăрăл сĕт-су ферми пур колхозсенчи колхозниксене вăлăн обязательнăй йĕркепе государствăна сĕт тăратас хисеплерен, маларăхри вăхăтра вуна процент скидкă памала туни вырăнне, çĕнĕ скидкăсем, фермăри ĕнесен хисепне кура, памала тăвас:

а) вĕсен тавăрăл сĕт-су ферминче 5 ĕнерен пуçласа 15 таран ĕне пур колхозсенчи колхозниксен государствăна сĕт тăратмали хăйсен обязательствинчен 20 проц. скидкă памала тăвас;

б) вĕсен ферминче 16 ĕнерен пуçласа 25 таран ĕне пур колхозсенчи колхозниксен государствăна сĕт тăратмали хăйсен обязательствинчен 30 проц. скидкă памала тăвас;

в) вĕсен ферминче 26 ĕнерен пуçласа 50 таран ĕне пур колхозсенчи колхозниксен государствăна сĕт тăратмали хăйсен обязательствинчен 50 проц. скидкă памала тăвас;

г) вĕсен ферминче 50 ытлă ĕне пур колхозсенчи колхозниксен государствăна сĕт тăратмали хăйсен обязательствинчен 60 проц. скидкă памала тăвас.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ **В. МОЛОТОВ.**

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхакан **Н. ПЕТРУНИЧЕВ.**

Мускав, Кремль,
1937 çулхи нойабĕрĕн 2 мĕшĕ.

Октябĕрти Социализăмла Аслă революцин çирĕм çул тултарнине Мадридра уйăвланă

ВАЛЕНСИ, нойабĕрĕн 1-мĕш (ТАСС). Мадрида ССР Сойузĕнче Социализăмла Аслă революцин çирĕм çул тултарнине уйăвлăмалли ерне пуçланнă. Хула урамĕсемпе площадĕсене Советпа Испани йалавĕсемпе илемлетнĕ. Совет Сойузĕн çитĕнĕвĕсем çинчен калакан пысăк афишăсем, Сталин, Ворошилов, Калинин йăлăнтăк тата партире Совет Сойуз правительствин ытти руководителĕсен ĕнесем Мадрид çурчĕсене илемлетеççĕ. Магазинсенче, пысăк площадьсенче йалавсемпе илемлетнĕ Сталин йăлăшăн бюстсем тăраççĕ. Магазинсен витринисем çинче Испани халăхĕн кĕрешĕнне кăтартакан ĕçкерчĕксем. Куранăмăлли вырăнсенче Совет Сойузне йăмăлли вăйомсемпе парнесене хурса тухнă.

Октябĕрти Социализăмла Аслă революцин çирĕм çул тултарнă уйăн йăвĕнче ССР Сойуз тусĕсен обществин выставки уçăлнă. Унта ССР Сойуз тусĕсен обществи Совет Сойузне йăпакан хăшпĕр парнесене йĕркелесе хунă. Залăсенче ССР Сойузĕн çирĕм çул хушшинчи çитĕнĕвĕсене кăтартакан фотографисене вырнаçтарнă.

ЙУТСĔРШЫВСЕНЧЕ

— ЛОНДОНРА октябĕрĕн 31-мĕшĕнче совет культурин вечерĕ пулса иртнĕ. Залра туллийех халăх пулнă. Сĕршер çынсене вырăн тивĕçмен. Вечерта „Сталинское племя" тата „Чапаев" йăтлă совет фильмĕсене пăхнă тата концерт пулнă. Концертра „Песня о родине" тата ытти йăрăсене те вырăсла йăрланă.

— МАДРИДРА социализăмла Аслă революцин çирĕм çул тултарнине уйăвламали ерне пуçланнă. Хула урамĕсемпе площадĕсене Совет тата Испани флагĕсемпе илемлетнĕ. Мадрид хулинчи çуртсем çинче — Совет Сойузĕн çитĕнĕвĕсем çинчен каласа паракан пысăк афишăсем, Сталин, Ворошилов, Калинин йăлташсен, партире правительствăн руководителĕсен портречĕсем. Магазинсен витринисенче — Испани халăхĕн кĕрешĕне кăтартакан ĕçкерчĕксем.

— ТĔЛĔНМĔН йăлташа фашизм тытăканĕнчен çăлас тĕлĕшпе çĕлекен комитет нойабĕрĕн 4-мĕшĕнче, Германи революционерне — Эдгар Андрене, фашиссем аспаллантарса вĕлернĕ кун, массăлă митинг иртерет.

(ТАСС).

Колхозник çĕнĕ тавар ыйтать

ТРАК. Ман Шетмĕ кооперативĕн лавкине кĕрсен, çийелтен пăхма, сана кирлĕ тавăрсем пур пек курăнаççĕ: супăнь, сахăр, премĕк, табак, спичкă, ик-виç çул сутăнмасăр выртакан чĕн пиçихсем, тăмесем, тахăсем тата ытти те. Колхозниксен культурлăхĕ ӳсет. Пӳрт-туртсене тата тытма тăрăшнă май, уйăрăмăнах Октябĕр революцин 20 çул тултарнă праçник хатĕрленнĕ май, колхозниксем лавкана пырсан картинăсем, портретсем, плакатсем, умывальниксем, зонтексем, сĕтел çине сармалисем, музыкăлă инструменчĕсем, сехетсем, лайăхрах кусăксисем ыйтаççĕ. Ку таваpсем Шетмĕ таврашĕнчи лавкасенче çук вара. Вăл таврасене кооператив кӳрсе килмест.

Мих. Александров.

Хутпĕлменлĕхе пĕтерме шутламаççĕ

Трак районĕнче хут пĕлменнисем 530 çын, сахал пĕлекенсем 106 çын шутланаççĕ. Хут пĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе райсӳтĕçпанĕ, комсомол, профсойуз организацийĕсем, йалсоветсемпе колхозсем пурте манăçа хăварнă. Трак йалсоветĕнче çте (район центрĕнче) хут пĕлменнисем 137 çын шутланаççĕ. Районра 26 йалсовет, вĕсенчен 4 йалсоветра кăна хут пĕлменлĕхе пĕтернĕ. Вĕренӳне хутшăнмасăр районра 170 ача йулна.

Çак фактсем вĕсем пурте райсӳтĕçпанĕ партине правительствăн постановленийĕсене пурнăçласа пымăннине кăтартаççĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Советне депутатсем суйламали кун инçе мар çĕтĕ, çапах та Трак райсӳтĕçпанĕнче ĕçлекенсем хăйсемшĕн кирлĕ вывăдсем туман-ха. Закамский.

Канаш—Шупашкар чукунçул строителĕстви

Кĕçĕн Çавал кĕперĕ урлă паровоз каçрĕ

Нойабĕрĕн 1-мĕшĕнче рельсăсем хывакан бригадăсем Кĕçĕн Çавал шывĕ урлă кĕпер тӳса пĕтернĕ хыççăн чукунçул линине малада хывма пуçларĕç.

Паровоз гудокĕ йăнтранă майех малтанах пухса çирĕплетнĕ линие кĕпер урлă шума пуçларĕ. Часах линине тĕксе пыракан паровоз тата кĕпĕрĕн çирĕп фермисене чĕтрентерсе пирвайхи хут çĕнĕ кĕпер урлă каçрĕ.

Ку кун линие хывнă ӳрте ĕçлекен бригадăсем 676 метр хушши рельсăсем хывнăç. Çапла Канашпа Шупашкар хушшинче 12,3 километр тăршĕ чукунçул пулчĕ.

Бригадăсем çак куншăнчех 86-шĕ километрти труба патнех çитеççĕ Анчах труба çине тăпра тултарса çитермен-ха. Канашпа Шăхасан районĕсем чукунçул çине ĕç вăйĕ организацилес ыйтупа питех те сӳрĕккен ĕçлеççĕ. Пайанки куна Шăхасан районĕнчен çурраннисем 317 çын, лашалисем 145 çын, Канаш районĕнчен—çурраннисем 25 çын, лашалисем 4 çын çеç ĕçлеççĕ. Çĕрпӳне Ишлей районĕсем те нăчар ĕçлеççĕ.

Рельсăсем хывассине пĕр чарăнусăр туса пыма çак кунсенчех 86 мĕш километрти тата ытти кĕперсемпе трубăсем çине тăпра тултарса çитермелле. Кăна тума колхозсем строителĕствăра ĕçлеме вăй организацилемелле. Вара суйлав кунĕ тĕлне Шупашкарпа Канаш хушшинче пойăсем сӳреме тытăнеç.

Телейлĕ çул, çамрăк патриоткăсем!

Пайан, нойабĕрĕн 4-мĕшĕнче, Шупашкар хулинчен 4 хĕр Инçет-Хĕвелтухăç крайне ĕçлеме тухса кайăççĕ. Вăлентина Хетагурова февраль уйăхĕнче „Комсомольская правда" хаçат урлă Инçет-Хĕвел тухăçне пыма йăтса пĕтĕм Сойузри çĕрсем патне йăнă чĕнӳне пирĕн Чăваш республикинчи хĕрсем—тăван çĕршывăн çамрăк патриотниксем ĕçне отаетлеççĕ. Пайанхине ĕнте Шупашкартан Инçет-Хĕвелтухăçне çамрăк патриоткăсен виççĕмĕш ушкăнĕ тухса кайăç.

Камсĕм-ха вĕсем, çав патриоткăсем? Марийă Августова, комсомолка, пионер-работницă, Шупашкар районĕнчи Йăкимовкă салинчен; Йĕвдокийă Баранова—парикмахер; Серафима Красильникова—типографăинчи накладчицă; тата Степанида Никитина—типографăинче линотип машинăна наборлакан.

Вĕсем пирĕн социализăмлă аслă тăван çĕршывăна суламлăн йуратаççĕ, совет Инçет-Хĕвелтухăçĕ тата ытларах тĕреклентĕр те чечеклентĕр тесе, вĕсем унта йăланлăхах ĕçлеме пуранма кайăççĕ.

Çул телейлĕ пултăр, çамрăк патриоткăсем!

Çĕнĕ актив ĕçе тытăннă хыççăн

ВĂРНАР (хамăр корр.). Районри Осоавиахим Совечĕ 1936 çулта пĕрте Осоавиахим пуçламĕш организацийĕсен председательĕсене пухса каналлу. туса иртерни пулман, вĕсене никам та йĕртсе йăлтах. Осоавиахимăн райсовечĕ хут çинче анчах шутланса тăнă. Руководствăра халăх тăшманĕсем те пуллă. Сак тăшмансем районри Осоавиахим организацийĕсенче пĕтĕмпех йăпăхтарса çитернĕ.

Районри Осоавиахим советне сĕнĕрен суйлаççĕ. Тăшмансене тата вĕсемпе кĕрешме пултарайман çынсене хуса каларса, вĕсен выраннне ĕçе йăрăхлă йăлташсене суйласа лартрĕç.

Райсовет нойабĕрĕн 1-мĕшĕнче колхозсенчи пуçламĕш организацин председательĕсемпе канашлу туса иртерчĕ. Канашăура 49 çын пулчĕ. Сĕнĕрен суйланнă йăлташсем пĕрин хыççăн теприн пысăк хаваспах-па суйлав пулса иртнĕ хыççăнхи çитĕнӳсем çинчен каласа параççĕ.

— Суйлав пухăнче ĕнĕр 12 çын пултăмăр, вĕсенчен хăшпĕрисем член укçисене çулталăк хушши тӳлеменнĕç, хăшĕ пĕрин член билечĕсем те сукчĕ. Халĕ, пирĕн организацинче 27 член шутланать. Пурĕ 3 кружок организацилерĕмĕр. Пăшал пеме вĕренмели кружокра 24 çын, ПВХО ĕçне вĕренмели кружокра 20 çын вĕренеççĕ. Епĕр колхоз правленине противогазем, винтовкăсем илме çăмăллăн татăлатăмăр. Декабрьре 12-мĕшĕнче Аслă Совета суйланă кун колхоз пурлăхне хурал тăрас ĕçе хăмăр çине илетпĕр, — тет Малти Кăкăмăри Осоавиахим организацин председательĕ Медведйев йулташ.

Çакăн пекех Мамалай колхозĕ, Леспромхоз, МТСтанци çумĕнчи организацисем те хăйсен ĕçесене тĕпренех йусама тытăнă.

Çаксемпе пĕрлех кайа йулса пыракан организацисем те пур. Акă, райĕстăвком çумĕнчи пуçламĕш организаци (председательĕ Матвей Никифоров) ку тапаннчен те суйлав туса иртермен, членсен шутне те пĕлмеççĕ.

Ейзенбраун.

Йединоличниксем çинчен манмала мар

Лачкассинчи (Тăвай р.) „Сăлтăр" колхозра суйлав Положенине вĕренеççине аван организацинеç. Суйлав Положенине вĕрентмешкĕн виçĕ кружок уçнă. Унта халăхи вăхăтра 81 колхозник вĕренет. Вăл шутран 27 хĕрарăм, тата 36 çамрăк. Суйлав Положени çинчен массă хушшинче ăнлантарас тĕллĕпе йăтарласа пĕр вечер туса иртернĕ. Халĕ тата справкăсем параканскĕтел организацинеç. Радио лекцисем итлеççĕ. Суйлавăсем вăлăн çурт тӳпса хатĕрлесе, унта ике пӳлĕм уйăрса хунă. Суйлав саккунне вĕрентес тĕллĕпе колхозра пилĕк агитатăр ĕçлет.

Анчах кунта çитменлĕхсем те пур-ха. Суйлав саккунне вĕрентеç ĕçе йединоличниксене ку тапаннчен те кружокосене йăвăртарман. Ку вăл пысăк çитменлĕх.

Ал. Пичишкин.

Çĕнĕ пурнăç такмакĕсем

Кĕпер айне вак каçрăм
Колхоз утне шăварма.
Ударникне тус турăм
Ĕçре пĕрле ăмăртма.

Хуратула мĕн, тесçĕ?
Виç кĕтеслĕ, тейеççĕ.
Ман савнине мĕн, тесçĕ?
Ударницă, тейеççĕ.

Кăвак лашан силхинĕ
Йăс турапа турăççĕ.
Ĕçре-пăттăр çынсене
Пур çĕрте те чыслаççĕ.

Симĕс курăк йĕшĕрет,
Тата симĕс пуласшăн.
Манăн савни вĕренет,
Инженера тухасшăн.

Ал. Разумов пухса çырнă.

Ейве—Алехин матчĕ

Нойабĕрĕн 1-мĕшĕнче Амстердами Пĕтĕм тĕнчере малти вырана тухассишĕн Ейвепе Алехин выльăнă шахмат матчĕн çирĕмĕш партийĕ никам сĕртейменнипе пĕтнĕ.

Матч 7½:4½ шутпа Алехин çĕнтернипе малалла тасалать.

(ТАСС).

Уйăхри плана тултарчĕ

Çĕмĕрле, (хамăр корр.). С. П. Петров йăвĕпе тăпаран комбинат октябĕр уйăхĕнчи плана 110,6 процент тултарчĕ. Уйăрăнах урапасем тăвакан тата столăрнăй цехсем лайăх ĕçлерĕç. Урапасем тăвакан цех хăйĕн планне 121,4 процент, столăрнăй цех 114,6 процент тултарнă.

Пĕр гектартан 439 центнер помидор

ДНЕПРОПЕТРОВСК, нойабĕрĕн 2-мĕш (ТАСС). Пăтихот районĕнчи Постышев йăвĕпе тăпаран йалхуçалăх ертелĕн пахчаçи Кучугура йулташ ку вырăнта нихăçан пулман пысăк тупăшлă помидор, пĕр гектартан 439 центнер пухса илнĕ. Колхоз ку помидора ӳстса 24 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Кучугура йулташа пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма кандидата палăртнă.

Йумах-халап ăстисене шута илесси çинчен

Совет писательĕсен пĕтĕм Сойузри съезьĕне вырăссен аслă писателĕ Алексей Максимович Горький çапла калаланă:

„Сăмах искусствăн пуçламĕпĕ фольклорта. Пухăр хăнăр фольклорăра, вĕренĕр ун тăрăх, йăкатса аваплатăр ăна. Вăл сире те, пире, сойузри писательсемпе прозаиксене те, ытти йумай материал парĕ. Иртнине мĕн чухлĕ авантарах илĕнĕр ăнăр, ăна ăнлантарас тĕллĕпе ытларах тарăнăн та хавасăлăрăхăн йăласа илĕнĕр хамăр хăй тăвакан ĕçĕн пысăк - пархатарлăхне".

Аслă пролетарлĕ писателĕн çак сăмахĕсем пире халăхăн талантлă пултарулăхне, унăн йумах-халапĕсене, сăвви-йурăсисене куллен-кун пухса пырса тĕнче пĕтмене хупăçĕç.

Октябĕр революцийĕччен чăваш халăх пултарулăхне пухас ĕç интĕ йăнăх пулнă. Çырса илнĕ йумах-халапсене шăпах та пичетлеменни, вĕсем кун çути курмасăрах архивсенче тусансемпе интĕсене выртнă. Сăтмĕнпине тата ку ĕçе пĕтĕмĕшпе теплĕ пекех буржуаллă националисеммисиперсем, пур таврашĕнче туса пынă. Паллах, вĕсеммĕн халăх пултарулăхĕн социалла вичĕмлĕхĕ, пурнăç йĕркисене хирĕçлекен сивĕлĕхĕ, халăха пысăлласа пурăннăн классемпе кулса тăрăхлакан сатирăлăхĕ ӳсĕлă пулман, çавăнпа та вĕсем фольклор произведенийĕсене сыпса илнĕ чух та пичетлесе кăларнă чух та, сивĕч кĕтесене йăкатса, урăхлатса, пуçпулса-тăракан классем интересĕсене пăхăнтарса, пăсса пынă.

Халăх талантне аталанса чечеклеммине пĕртен-пĕр Октябĕр революцийĕ кăна сарлака çул уçса панĕ. Ĕмĕр хушшисем пуемăр айĕнче пăчăхса иррăнни халăх пултарулăхĕ пĕтĕм çăкăр тулли уçă сăпка йăнрама пуларĕ. Ирĕкре çунатланнă халăх талантĕ çĕнĕ ĕмĕр, çĕнĕ телейлĕ самана çитнĕ йăрăсем, халапсем хурса йăрлама тытăнчĕ.

Халăх хушшинче талантлă йумахçăсем, сăвă-йурă ăстисем питĕ нумай. Сăмахран, Сĕмĕрле районĕнчи Йумашай-Ялатăрти Захар Ивăнов йăтăлă колхозник, хута сахăлă вĕренĕ пулнн те, мĕн пурĕ сĕрме пăхăн йумах-халап щăлкет, сăвăсем-йурăсем сыпать, тĕрлĕ калăпсем майласа кăларать. Патăрьел районĕнчи вăтă колхозник Кашкăр Микуни те йумах-халап ăстисем хушшинче питĕ пысăк вырăн йышăнаса тăрать. Кашкăр Микуни те, Иванов Захар пекех, хăй те сăвă-йурăсем, калавсем сыпать. Сĕрпӳ районĕнчи Иофремова Татьянăна та йăпа йăтна асăнса илмо тивĕçлĕ. Иофремова йăлташ революцийĕнчен пачах хут пĕмен хĕрарăм пулнă, халĕ вăл хăй йумахĕсенче хăй алăпне сыpса пичетлепарса пырать. Унăн йумахĕсем „Сунтара" пичетленĕç. Кун пек талантсем халăх хушшинче татах та темĕн чухлех тупма пулать.

Анчах та, тӳрех каламала, халăх пултарулăхне пухтарса ăсламăлăх йĕнчен тĕнче ĕçе епĕр халĕ те кирлĕ таран туса пыраймастпăр-ха. Епĕр ку вăхăтчен те халăх хушшинчи ăслă та талантлă сăвăçă-йурăçсене, йумах-халап ăстисене шута илсе сиктермен, вĕсен пуйăн та сарлака репортăжне нĕлсе ситеröймен. Ку ситменлĕхе пирĕн халех, пиллĕн-вăраха хăвармăçăç, пĕтермелле.

Чăвашсен культурăн ĕçĕн ăслăлăхпа тĕнчен институчĕ халăх пултарулăх мăçтăрĕсене (сăвă-йурă, йумах-халап ăстисене) регистраци туса иртерет. Çак шутпа институт каннн халапçă-йумахçă патнех анкетă парса ун çинчен мĕн пур кирлĕ çеденисем илмо тăрăшать. Çак ĕçе Институт пĕр хăйĕн вăйĕпе кăна, ăналлах, туса ситеремес сутçăвăнна та халăх пултарулăхĕн ăстисене шута илес сĕрте каннн ӳнтĕлĕн, каннн комсомолепĕн, каннн хут вĕренекен çамрăкăн, каннн колхозникăн хĕрĕлĕн хутшăлса ĕçлемелле.

Чăвашсен культурăн ĕçĕн ăслăлăхпа тĕнчен институчĕ.

ИЗВЕЩЕНИЕ

Нижеследующие товарищи вызываются в Партколлегию при Уполномоченном КПК при СНК ЧАССР по чувашской АССР и г. Чебоксары (ул. Плеханова, д. № 5)

на 10 ноября к 10 часам утра

1. Зотов Н. И.—Алатырского района.
2. Мухин Н. А. — Тоже.
3. Рогушин С. И. — Тоже.
4. Гарев П. П. — Тоже.
5. Рыбенков А. П. — Тоже.
6. Матвеев А. М. — Аликовского района.
7. Васильев И. В. — Тоже.
8. Афиногенов М.—Вурнарского р-на.
9. Сафронов Н. Е. — Тоже.
10. Троицкий М. В. — Ишлейского района.
11. Шмелев С. И. — Ибресинского района.
12. Максимова М. П. — Канашского района.
13. Яндушкин С. В. — Тоже.
14. Железков Т. К. — Тоже.
15. Мукшин И. З. — Тоже.
16. Федотов В. — Козловского района.
17. Кузнецова В. П. — Красночетайского района.
18. Глухова И. Д. — Мариинского района.
19. Львова А. — Тоже.

На 11 ноября к 10 часам утра

20. Сидякин В. А.—Порецкого района.
21. Балденков Е. А. — Тоже.
22. Демин Т. Д. — Тоже.
23. Назаров М. Е. — Тоже.
24. Трофимова Е. Ф. — Тарханского района.
25. Галимзянов — Шихирданского района.
26. Кураков Т. М. — Шемуршинского района.
27. Швецов А. В. — Тоже.
28. Козелков Д. И. — Шумерлинского района.
29. Павлов А. П. — Цивильского района.
30. Владимиров Ф. В.—Чебоксарского района.
31. Вечтомов А. А. — гор. Чебоксары.
32. Милютин В. С. — Тоже.
33. Лаврентьев Т. Л. — Тоже.
34. Тимофеева К. В. — Тоже.
35. Андреев А. А. — Тоже.
36. Сычев П. И. — Тоже.
37. Миронов Н. С. — Тоже.
38. Алендеев Г. Т. — Тоже.

На 13 ноября к 10 часам утра

39. Данилов Д. Д. — г. Чебоксары.
40. Восляков А. Ф. — Тоже.
41. Орлова Е. — Тоже.
42. Сергеев Г. С. — Ядринского р-на.
43. Волков К. В. — Тоже.
44. Скворцов З. Ф. — Янтиковского района.
45. Иванов А. И. — Тоже.

Райкомам ВКП(б) просьба обеспечить явку вышеуказанных товарищей и выслать своих представителей.

Партколлегия.

Йалхуçалăх ертелĕн уставне пăсаççĕ

Йалхуçалăх ертелĕн уставĕнче колхозан тулăшне колхозниксем хушшинче ĕçкунĕсем тăрăх ес валеçмели çинчен тĕлĕн кăтартса панă. Устав хушнă тăрăх, çулталăкри тулăша каннн колхозник мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тунине шута илсе валеçмелле. Анчах та устав хушнине чылай колхозсенче пурнăçа кĕртмеççĕ. Федоров колхозник сырса пĕлтернĕ тăрăх „Хĕрлĕ сăлтăр" колхозра (Çĕрпӳ р.) касалли тулăша валеçнĕ чухне чылай йăнăшсем тăвă. Парса-йăсмак уламне, шăрашла çуртри арпине килĕрĕнпе пуçне тем-пĕр валеçнĕ. Акă М. Гаврилова 150 ĕçкунĕне 9 кăрман ярма илнĕ пулсан, Ф. Кузьмина та 450 ĕçкунĕне 9 кăрман кăна яланă.

Çĕрулмине те йĕркесĕр валеçнĕ. Кам мĕн чухлĕ илме пултарать, вăл сăвăн чухлĕ илнĕ. Кучашкап туни колхозниксен кăмăлне, чи малтан ĕçлес кăмăлне ӳстĕ.

Йалхуçалăх ертелĕн уставĕнче: „Ертелĕре çаксем пĕрлешеççĕ: мĕн пур ес выльăхĕ, йалхуçалăх ĕçхатĕрĕсем (плуг, акмали машинă, сӳре, аван çапмали машинă, ута сулмали машинă), вăрлăх запасĕсем, пĕрлештернĕ выльăх-чĕрлĕхсене тăрантарса усрама кирлĕ таран выльăх апачĕсем, ертел хуçалăхне тытма кирлĕ хуçалăх суртĕйĕсем тата йалхуçалăх продукцинчен тĕрлĕ кирлĕ йăпаласем ĕçлесе калăпаран предприятисем пуртĕ", тенĕ. Уставра çырнисем пуринпех те саккун пулмала, ăна пăсса ĕçлеме никам та пултарăймаст. Артиховпа Аниçимов йултаççем сырса пĕлтерне тăрăх, Çĕрпӳ районĕнчи Киров йăвĕпе тăпаран колхозра пайăнки куна лаша тавăрашĕсене пĕрлештермен. В. Аниçимов колхозник бригадир хушнине „Грузовик" йăтлă лашана ĕçе кайма кӳлĕ те тăратна пулнă. Çав вăхăтра лаша „хуçи" пынă та, кӳлнĕ лашана илсе кайнă.

Чылай колхозниксем „хăйсен" хăмăчĕсемпе ĕнерчĕкĕсене амбарсенче усрасçĕ, вĕсене ытти колхозниксене усă курма памаççĕ. Колхозра учотпа отчот ĕçĕ калама çук йăпах выраннта. Уставра хушнă тăрăх бригадирсен каннн ернерех колхозниксем мĕн чухлĕ ĕçлеминне шута илсе ĕçкĕнĕксем çине сырса пымалă. Анчах Киров колхозра ĕçкунĕсене 2—3 ӳлăх иртсен кăна сырса параççĕ. Ĕçкунĕсене йĕркелĕ шута илсе пиманни, колхозниксем хăйсем мĕн чухлĕ ĕçленине тĕплĕн пĕлсе тăманни—ĕçдисциплинине хавшатма çеç пулăшать. Çапла вара Киров колхозра ĕçдисциплинине йăпăхтарса йăнă. Колхозниксем йулашки вăхăтсенче ĕçе тухми пулнă.

Уставра çырнине колхозри ревизи комиссийĕн çулталăк хушшинче 4 хутчен ревизи тумала. Павлов йăлкор çырса пĕлтерне тăрăх, Çĕрпӳ районĕнчи „Красный Октябрь" колхозра 1937 çулта ревизи вуçех те туман. Колхоз председательĕнне ĕçленĕ Сидоровăн 373 тенкĕ расхатăр, вăлăх 700 тенкĕ тăпаран колхоз лашине вĕлерине. Çулталăк хушшинче фермăра 66 сысна вилнĕ. Учот ĕçне йăпăхтарнă.

Устăп —саккун, унăн каннн пунктне пурнăçа кĕртес пулать. Устава пăсса ĕçлекенсемпе хыттăн кĕрешни кирлĕ.

Мих. Йăковлев.

Ответлă редактăр П. И. ИВАНОВ

КОЛХОЗСЕНЕ

Шупашкарти Горторг договăрсем тăрăх çакнашкал ĕçсем парать:

1. Хула тăрăх тăвар турттарма.
2. Краçин турттарма.
3. Хула тăрăх тĕрлĕрен таварсемпе пахчасимĕçсем турттарма.
4. Шупашкар, Тутаркас, Йшлей тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи пасарсене таварсем турттарма.

Чебторг кантурĕнче ыйтса пĕлмелле, Кадыков урамĕ, 5—12 № çурт.

2—2. ЧЕБТОРГ ДИРЕКЦИЙĔ.

ШУПАШКАРТИ „БАКАЛЕЙА" МАГАЗИНĔ

Октябĕр уйăвĕ тĕлне

Ачасене валăлăи

парнесем хатĕрлеме заказсем йышăнать.

Парнесене йăрăхатĕрленĕ пакетсем йăпне конфетсем, пĕрмĕкеем, печенисем тата шоколадсем тултарса тăваççĕ.

Пакетсем йăпне тултарса хатĕрленĕ парнесен хакĕ 3 тенкĕрен пуçласа 15 тенкĕ таран пулать.

3—3. ДИРЕКЦИ.

„Чăваш Коммуне" çырăнса илмели хакпан: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха —2 т. 50 пус. Хисĕплĕйсене кайăна памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 833. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста Заказ № 1923. Тираж 11156. ф. 58—92 см. 1—1 п. л.